26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943 МАРТ 20 ШАМАТКУН 62(6299) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Совет Информаци Бюровĕнчен

Мартăн 18-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Мартăн 18-мĕшĕнче пирĕн войскăсем малтанхи еннеллех çапăçса пынă.

Баренц тинĕсĕнче пирĕн карапсем тăшманăн 6.000 тонна водоизмещениллĕ транспортне путарнă.

* * *

Мартăн 17-мĕшĕнче фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче пирĕн авиаци чаçĕсем нимĕçсенне войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 50 автомашинăран кая мар пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, полевой тата зенитнăй артиллерин 10 батарейин вутне пусарнă, боеприпассен 2 складне сирпĕтсе янă, тăшманăн 2 чугунçул эшелонне аркатса тăкнă.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче пирĕн войскăсем малалла тапăнса пырса халăх пурăнакан темиçе пункта, вăл шутра Издешково ятлă район центрĕпе чугунçул станцине тытса илнĕ. Тăшман вирлĕн персе хирĕç тăрать, уйрăм участоксенче контратакăсем тăвать. Игорьевскаяран кăнтăртарахра нимĕçсен пехотнăй дивизийĕ 15—20 танк пулăшса пынипе тата артиллерипе миномётсен темиçе батарейи пулăшнипе совет войскисен наступленине чарма хăтланнă. Хаяр çапăçусем пулнă хыççăн пирĕн чаçсем гитлеровецсем хирĕç тăнине çĕнтернĕ, тăшман çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен пысăк çухатусем тӳснĕ.

* * *

Белый хулинчен кăнтăртарахра пирĕн войскăсем малалла тапăнса пырса халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Совет танкисчĕсем тата мотопехота тăшманăн опорнăй пунктне çавăрса илнĕ. Кĕске çапăçу хыççăн хĕçпăшала пăрахма килĕшмен нимĕç гарнизонне пĕтерсе тăкнă. Тытса илнĕ трофейăсем хушшинче 2 танк, 6 противотанковăй оруди, 9 миномет тата боеприпассен склачĕ пур. Тепĕр участокра тăшман тылĕнче кĕрешекен пирĕн разведчиксем гитлеровецсен автоколоннине аркатса тăкнă. Нимĕçсен боеприпассем тиенĕ 20 ытла автомашинине тата хăй тĕллĕн çӳрекен 2 орудине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Чугуев районĕнче пирĕн войскăсем тăшман танкĕсене тата мотопехотине хирĕç хаяррăн çапăçнă. Хăйсен çухатнă позицийĕсене каялла илес шутпа нимĕçсем, çухатусене пăхмасăрах, пирĕн чаçсене хирĕç пĕрмаях контратакăсем тăваççĕ. Гитлеровецсен пур атакисене те вĕсене пысăк çухатусем тӳстерсе сиресе пăрахнă. Тепĕр участокра пирĕн подразделенисем нимĕçсен 6 танкне персе çĕмĕрнĕ тата тăшман автоматчикĕсен пĕр ротине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Житомир облаçĕнчи партизансен совет Украини 25 çул тултарнă ятпа хисепленекен отрячĕ март уйăхĕн пуçламĕшĕнче нимĕçсен карательнăй отрядне тапăннă. Çапăçу хирĕнче хăйсен 60 çыни виллине пăрахса хăварса, гитлеровецсем каялла чакнă. Житомир партизанĕсен тепĕр отрячĕ чугунçул кĕперне сирпĕтсе янă, вăл вăхăтра кĕпер патне тăшманăн поезчĕ пырса çитнĕ пулнă. Взрыв пулнипе паровоз тата боеприпассем тиенĕ 8 вагон ӳпĕнсе кайнă.

* * *

Капитан Хирхачев юлташ командир пулса ертсе пыракан совет пароходне Баренц тинĕсĕнче тăшманăн 4 бомбардировщикĕ тапăннă.

Самолетсем аялтанах пароход çине 12 бомба пăрахнă тата пулеметсемпе пенĕ. Лайăх маневрсем тунине пула çав бомбăсенчен пĕри те пароходa тивмен. Пароход команди тăшман тăвакан атакăсене çав тери хастарлăн сирсе пынă, нимĕçсен пĕр самолетне персе ӳкернĕ. Тăшманăн тепĕр самолетне сиенленĕ. Пароход совет портне чиперех çитнĕ, кирлĕ çĕре хаклă груз илсе çитернĕ.

ВКП(б) Обкомĕнче

Чăваш республикинчи колхозсемпе МТС-сем тата совхозсем 1943 çулхи çуракине хатĕрленсе çитнине пăхса тухасси çинчен

ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ Чăваш республикинчи колхозсемпе МТС-сем тата совхозсем çуракине мĕнле хатĕрленсе çитнине кăçалхи апрелĕн 1-мĕшĕнче пăхса тухма йышăннă.

ВКП(б) райкомĕсене, МТС-семпе совхозсен политотделĕсене, райсовет исполкомĕсене колхозсемпе МТС-сем тата совхозсем кăçалхи çуракине мĕнле хатĕрленсе çитнине пăхса тухас ĕçе партипе совет активне, комсомол организацийĕсене, çавăн пекех тата ăмăртакан колхозсемпе МТС-сен представителĕсене явăçтарма сĕннĕ.

ВКП(б) райкомĕсемпе райсовет исполкомĕсене çуракине мĕнле хатĕрленсе çитнине пăхса тухнин итогĕсене колхозниксен пухăвĕсенче, МТС-семпе совхозсенчи рабочисемпе служащисен пухăвĕсенче сӳтсе явма, палăртнă çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе йышăнма кирлĕ мерăсене пурне те йышăнма тата çуракине ăнăçлăн ирттерес тĕлĕшпе практикăллă мероприятисем палăртса хума хушнă.

Райсовет исполкомĕсен, МТС-семпе совхозсен политотделĕсен, ВКП(б) райкомĕсен колхозсемпе МТС-сенче тата совхозсенче смотр ирттерме хатĕрленес ĕçе анлăн сармалла. Çавна тума районсенчи партипе совет активне колхозсене ямалла; смотр пуçланнă кун тĕлне çуракине хатĕрленес ĕçе вĕçлемелле.

Смотра хатĕрленес ĕçе организацилеме районсене республикăри партипе совет активне янă.

ВЛКСМ Центральный Комитетĕнче

Трактористкăсен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕн 1942 çулхи итогĕсем

ВЛКСМ Центральный Комитечĕ трактористкăсен тата хĕрарăмсен трактор бригадисен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕн 1942 çулхи итогĕсене пăхса тухнă.

ЦК ВЛКСМ ăмăртура уйрăмах Мускав, Калинино, Тула, Горький облаçĕсенчи, Чăваш республикинчи тата ытти трактористкăсем лайăх тĕслĕхсем кăтартнине паллă тунă.

Чăваш республикинчи МТС-сенче ĕçлекен 5 трактористкăна — М. В. Толстова (Ишлей), М. А. Соловьева (Кувакино), Е. Ф. Кудрявцева (Шупашкар), А. Г. Гордеева (Елчĕк) тата Д. Е. Ермолаева (Тăвай) юлташсене ĕçре уйрăмах пысăк çитĕнӳсем тунăшăн ВЛКСМ Центральный Комитечĕн хисеплĕ грамотине парса наградăланă.

Республикăри 25 трактористкăна кăкăр çине çакмалли значоксем парса наградăланă. Акă вĕсем: А. Г. Никифорова (Йĕпреç МТС-ĕ) М. В. Толстова, Е. К. Ефимова (Ишлей МТС-ĕ), М. Г. Волкова, С. А. Архипова (Канаш МТС-ĕ), К. Г. Герасимова (Красноармейски МТС), Д. Д. Крупинова (Хĕрлĕ Чутай МТС-ĕ), М. А. Соловьева (Кувакино МТС-ĕ), Н. М. Мефодьева (Первомайски МТС), Ф. И. Ильина (Вăрмар МТС-ĕ), А. С. Семенова, С. С. Сидорова, Н. И. Иванова (Шăхасан МТС-ĕ) М. С. Степанова. Р. К. Константинова, А. Г. Гордеева, Д. Е. Ермолаева, Е. П. Петрова (Елчĕк МТС-ĕ), А. В. Васильева, Н. П. Кузьмина, П. Т. Воробьева (Тăвай МТС-ĕ)

Танксемпе самолетсем тума 65.589 пин тенкĕ пухăннă

Республикăра Хĕрлĕ Çар валли танксемпе самолетсем тумашкăн укçа пухас ĕç халĕ те пысăк çĕкленӳпе пулса пырать. Мартăн 1-мĕшĕпе 15-мĕшĕ хушшинче çак ĕç валли 21.967 тенкĕ пухнă. Çапла вара танксемпе самолетсем тума республикăра мартăн 16-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмпе 65.589 пин тенкĕ пухăннă.

Ку ĕçре малтанхи пекех Пăрачкав, Чкаловски, Шупашкар районĕсем, Улатăр хулипе районĕ, Шупашкар хули малта пыраççĕ.

Танксемпе самолетсем тума Шупашкар хулинчи ĕççыннисем юлашки икĕ эрне хушшинче 2.835.000 тенкĕ, Чкаловски районра 1.598.000 тенкĕ, Шăмăршă районĕнче 1.074.000 тенкĕ тата Улатăр хулипе районĕнче — 1.589.000 тенкĕ пухнă.

ÇУРАКИНЕ БОЛЬШЕВИКЛА ХАТĔРЛЕНСЕ КĔТСЕ ИЛЕР

Çуракине тухма хатĕр

ШАХАСАН. (Хамăр корр.). Ухманти «Победа» колхоз çуракине хатĕрленсе пысăк ĕçсем туса ирттерчĕ. Çуракине ирттерес ĕçĕн ответлăхне кунта кашни колхозникпе колхозница çирĕп туйса тăрать. Ăна кĕске срокра лайăх туса ирттернипе пысăк тухăçлă тырпул туса илмеллине ăнланать.

«Победа» колхоз пысăк. Унта темиçе çĕр хуçалăх пĕрлешнĕ. 10 бригада. Кашни бригада çуракине хатĕрленес ĕçе плансем тăрăх туса пычĕ. Халĕ колхоз правленийĕ колхозăн çулталăкри ĕçĕсен планне тăвать, бригадăсемпе звеносене планлă заданисем çирĕплетсе парать.

Çуракине хатĕрленсе, колхозниксем 600 гектар çинче юр тытса хăварчĕç, 1.500 центнер вăрлăх сортласа хатĕрлерĕç. Вăрлăхсене триерпа икĕ хутчен сортланă, вĕсем пурте паха кондициллĕ. Çурхи тырăсем акмалли уйхире тăкма пурĕ 3.015 тонна тислĕк пухса хатĕрленĕ. 10 тонна фосфорит çăнăхĕ илсе килнĕ тата 121 центнер кĕл, 80 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă.

Колхоз çуракине тухас умĕн юлнă вăхăтпа усă курса, халь государство умĕнчи обязательствăсене парса татма тăрăшать. Хĕрлĕ Çар фондне тата 14 центнер аш-какай хыврĕ, 1943 çулхи обязательство шучĕпе государствăна 50 центнер аш-какай, 5.200 литр сĕт пачĕ. Колхозниксем те колхозран юлмаççĕ. 63 колхозникĕн хуçалăхĕсем государствăна 1943 çулшăн аш-какай парса татрĕç.

В. Веселов.

Бригадăсем кире тухма хатĕрленеççĕ

КОМСОМОЛЬСКОЕ, мартăн 16-мĕшĕ. **(Телефонпа).** МТС коллективĕ партипе правительство «МТС-сен тракторĕсене, комбайнсене тата ялхуçалăх машинисене 1943 çулхи уйхир ĕçĕсенче ĕçлеме хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановлени мартăн 14-мĕшĕнче сӳтсе-яврĕ. Партипе правительство йышăннă постановлени сӳтсе-явнă куна пирĕн трактористсемпе трактористкăсем тракторсене юсаса пĕтернипе паллă турĕç. Мартăн 14-мĕшĕнче МТС мастерскойĕнчен юлашки трактора юсаса кăларчĕç. Халĕ ĕнтĕ пирĕн пур тракторсем те çуракине тухма хатĕр. Çавăн пекех пирĕн МТС ялхуçалăх машинисене те пĕтĕмĕшпех юсаса лартрĕ.

Бригадăсене комплектласа çитертĕмĕр. Трактористсем, прицепщиксем, учетчиксем хăйсен вырăнĕсенче. Бригадирсем тракторсемпе ялхуçалăх машинисене йышăнма хатĕрленеççĕ. Ĕç нормисемпе паллашаççĕ, социализмлă обязательствăсем илеççĕ.

Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса, Новиков юлташ ертсе пыракан хĕрарăм-трактористкăсен бригади кăçал 15 лаша вăйлĕ кашни тракторпа 800 гектар сухалама тата ытти ĕçсене тума обязательство илчĕ. Комсомолецсемпе çамрăксен бригади те çавăн пек обязательство илсе ытти бригадăсене ăмăртăва чĕнчĕ.

Ш. Ширкадинов.
МТС директорĕ.

Колхоза кĕреççĕ

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Фронтпа çĕршыва пĕрле ĕçлесе пулăшас тесе, халиччен уйрăм хуçалăхпа пурăннă хресченсем колхозсене кĕреççĕ. Халăхсен çулпуçĕ Сталин юлташ февралĕн 23-мĕшĕнче войскăсене панă приказа ăнлантарса панă хыççăн Буденный ячĕпе тăракан колхоза икĕ хуçалăх хутшăнчĕ. Халь кĕнĕ колхозниксем Митрофановăпа Трофимов юлташсем колхозра пĕтĕм вăйран ĕçлеме пулчĕç.

Н. Виноградов.

Вăкăрсемпе хĕсĕр ĕнесене ĕçе вĕрентнĕ

КАЛИНИНО. Малтикасри «Пĕрлешӳ» колхоз иртнĕ çултах икĕ вăкăра тата виçĕ хĕсĕр ĕнене ĕçе вĕрентнĕ. Вĕсемпе суха та тунă, кĕлте те кӳнĕ тата хуçалăхри вак ĕçре усă курнă. Кăçал хĕлле вăкăрсемпе уя тислĕк кăларнă.

Мăйракаллă шултăра выльăхсем те ĕçе хăнăхма пултарнине шута илсе, кăçал татах виçĕ вăкăра ĕçе вĕрентнĕ. Кӳлмелли хатĕрсене тунă. Çапла «Пĕрлешӳ» колхоз кăçал çуракинче, лашасемсĕр пуçне, вăкăрсемпе ĕнесен вăйĕпе те усă курать.

Г. Матвеев.

Пăрçа çапмалли çĕнĕ йышши молотилка

Пăрçа тата пăрçа йышши культурăсене 1943 çулта пирĕн республикăри колхозсен нумайрах акса тумалла пулать. Вĕсене акмалли çĕр лаптăкĕ нумай сарăлмалла. Çакă вăл пăрçана лайăхрах майсемпе пуçтарса кĕртсе хăвăрт çапса илме çĕнĕ майсем шыраттарать. Ялхуçалăх специалисчĕсен, колхоз председателĕсен çакăн çинчен халех шутласа пăхмалла.

Пăрçа анасем çинчен çулса пухнă хыççăн нумай выртма юратмасть. Ăна хăвăрт çапса илсе амбарсене кĕртмелле. Халиччен тата халĕ те пирĕн колхозсенче пăрçана тăпачăсемпе е ытти тырăсем çапмалли молотилкăпа тата лашасемпе аштарса çапнă. Çакăн пек туни пăрçа çапас ĕçĕн ăнăçлăхне ӳстерсе пымасть тата молотилкăсемпе çапнă чухне пăрçа тĕпренни те пулкалать.

Ишлей районĕнчи «Парижская Коммуна» тата «Красная Низа» колхозсенче колхозниксем пăрçа çапмалли çĕнĕ конструкциллĕ молотилка тунă. Вăл молотилкăсемпе ку колхозсем ик-виçĕ çул ĕнтĕ усă кураççĕ. Вăтамран илсен те çĕнĕ конструкциллĕ молотилка талăкра виçĕ гектар пăрçа çапать. Асăрхас пулать, çапнă чухне пăрçа нимĕн чухлĕ те тĕпренмест. Ĕçе сменăсемпе талкăшĕпех туса пырсан, çак молотилкăсемпе пĕр кун хушшинчех 5—6 гектар çинчен пухса илнĕ пăрçана çапса кăларма пулать.

Мĕнле тунă-ха вăл молотилкăна? Пăрçа çапмалли çĕнĕ конструкциллĕ молотилкăна колхозниксем хăйсемех тунă. Ăна тума юман, вĕрене, хурăн йывăççем çеç кирлĕ. Молотилкăн конструкцийĕ те çăмăл.

Молотилкăн барабанне çапла тунă. Йывăçран тунă шкив тимĕр тĕнĕл çинче çаврăнса тăрать. Шкива тимĕр листапа витнĕ. Шкивăн вĕçĕсенче йывăçран тунă икĕ диск пур. Вĕсене те тимĕрпе çирĕплетнĕ. Дисксене ултă планкăпа тытăнтарнă. Кашни планка çинче виçшер шăл. Дисксене хурăнран, планкăсене юманран, шăлсене вĕренерен тунă. Шăлсен вăрăмĕшĕ 7—8 сантиметр. Çапла молотилкăн барабанĕ ултă планкăран тăрать. Вĕсене дисксем çумне çирĕплетсе лартнă. Кашни планкăн виçĕ шăл, çапла молотилкăн барабанĕ çинче пурĕ 18 шăл.

Молотилкăн декине хурăнран тунă, ун çинче вĕренерен тунă икĕ рет шăл ларать. Кашни ретре 11-шер шăл. Молотилкăна ĕçе ярасси ытти чухнехи пекех, вăл лаша вăйĕпе ĕçлет.

Молотилкăн калăпăшĕ пысăк мар, вăрăмăшĕ пурĕ те пĕр метр та 25 сантиметр çеç. Унпа ĕçлеме мĕнпурĕ те 7 çын çеç кирлĕ. Çак молотилка пирĕн колхозсенче хăйне тивĕçлĕ вырăн йышăнма пултарать. Иртнĕ çулсенче ĕçлени çакна çирĕплетсе парать. Çĕнĕ молотилка пăрçа çапас ĕçĕн хăвăртлăхне ӳстерет, ĕç вăйне перекетлеме май парать тата пăрçа та ванмасăр, лайăх пахалăхпа çапăнса тухать. Унпа ĕçлеме квалификациллĕ кадрсем кирлĕ мар тата вăл лаша вăйĕпех çăмăллăн ĕçлет.

Пирĕн республика вăрманран пуян. Юман, вĕрене, хурăн вĕсенче туллиех. Колхоз председателĕсем, райçĕрĕç пайĕсем çĕнĕ конструкциллĕ молотилкăпа интересленни кирлĕ. Ăна кашни колхозрах тума май пур. Астаçă колхозниксене ĕçе чĕнмелле.

Т. КРУЖИЛИН,
Чăваш ялхуçалăх институчĕн доценчĕ.

Укерчĕк çинче: Н-ски артиллери йĕки чаçĕн командирĕ — чаплă Чапаев ывăлĕ подполковник А. В. Чапаев тата подполковник И. В. Купин Хĕрлĕ Çар чаçĕсем йышăнса илнĕ халăх пурăнакан пунктри çынсемпе калаçаççĕ.
Н. АСНИНА фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

МАЙ УЯВĔ УМĔНХИ СОЦИАЛИЗМЛĂ ĂМĂРТУ

ВЦСПС-па Çулйĕр Халăх Комиссариатĕнче

Профессиллĕ Союзсен Пĕтĕм Союзри Центральный Совечĕпе Çулйĕр Халăх Комиссариачĕ Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвăн 1943 çулхи февраль уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухнă.

Вĕсем Улатăрти паровозсем юсакан завода (начальникĕ Крупский, партбюро секретарĕ Шерстюк, завком председателĕ Демидов юлташсем) Çулйĕр Халăх Комиссариачĕн КУÇСА ÇӲРЕКЕН ХĔРЛĔ ЯЛАВНЕ тата ИККĔМĔШ ПРЕМИ пама йышăннă.

Инвалидсен чи лайăх артелĕ

Сĕнтĕрвăрринчи „Социализм“ артеле Всекоопинсоюз куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялав тата 10.000 тенкĕ панă

ССР Союзĕнчи инвалидсен артелĕсен Кооперативнăй Союзĕ артельсен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕн 1943 çулхи февраль уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухнă.

Сĕнтĕрвăрринчи «Социализм» артеле (председателĕ Т. М. Ратькова юлташ) Всекоопинсоюзăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне тата пĕрремĕш преми — 10.000 тенкĕ памалла тунă.

«Социализм» артель коллективне Чăвашкоопинсоюз та февраль уйăхĕнчи ĕçшĕн хăйĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне тата ĕçре уйрăмах палăрнă работниксене премилеме 4.000 тенкĕ панă.

Артель коллективĕ февраль уйăхĕнче пĕтĕм продукци туса кăлармалли плана 193 процент, куллен кирлĕ таварсем туса кăлармалли плана 203 процент тултарнă.

Артельре ĕçлекенсем Май уявĕ тĕлне иккĕмĕш кварталти производство программине 70 процент тултарма обязательство илнĕ.

„Большевик“ завод коллективĕн çĕнтерĕвĕ

ÇĔМĔРЛЕ, мартăн 19-мĕшĕ. **(«Чăваш Коммуни» корр.).** Профсоюзсен Пĕтĕм Союзри Центральный Совечĕпе ССР Союзĕн Çăмăл Промышленность Халăх Комиссариачĕ заводсен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕн 1943 çулхи февраль уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухнă. Çĕмĕрлери «Большевик» завода (директорĕ Шустин, партбюро секретарĕ Розенберг тата завком председателĕ Попова юлташсем) иккĕмĕш преми пама йышăннă.

Завод коллективĕ çак çĕнтерĕве Хĕрлĕ Çар XXV çул тултарнă уяв ячĕпе пынă ăмăртура çине тăрса ĕçленипе тунă. Завод ССР Союзĕнчи заводсем хушшинче иккĕмĕш вырăна тухни çинчен калакан хыпар рабочисемпе работницăсене производствăллă çĕнĕ çĕкленӳ тума хавхалантарчĕ.

Май уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртура илнĕ обязательствăсене пурнăçласси шĕн кĕрешсе, завод коллективĕ кунсерен чаплă çĕнтерӳсем тăвать. Стахановецсем Закалябин, Моторин, Долгов, Кощеев, Фирсов юлташсем март уйăхĕнче тăтăшах нормăна 250—275 процент тултарса пыраççĕ. Завод коллективĕ çур уйăх планне 118 процент тултарчĕ. Уйрăм кунсенче вăл тата лайăхрах ĕçлет

Производствăллă çĕклен

КАНАШ, мартăн 18-мĕшĕ. **(Телефонпа).** Хулари апат-çимĕç комбиначĕ (управляющийĕ коммунистка Н. Захватова юлташ) Май уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнчĕ.

Комбинатра ĕçлекенсем март уйăхĕнчи плана 120 процент тултарма, Май уявĕ тĕлне иккĕмĕш квартал планне 50 процент тултарма, çуркуннехи шывшур пуçланичченех комбинатăн подсобнăй хуçалăхне çуракине хатĕрлесе çитерме, çав вăхăт тĕлне комбината кирлĕ чĕртавара тата вутă турттарса хатĕрлеме обязательство илнĕ.

Комбинат коллективĕ илнĕ обязательствăсене пурнăçласси шĕн çине тăрса кĕрешет. Мартăн малтанхи вунăкунлăхĕнче комбинат уйăхри плана çурринне яхăн тултарчĕ, мартăн 15-мĕшĕ тĕлне — плана 70 процент ытла тултарнă. Севастьяновăпа Никитина юлташсен цехĕсем ĕç нормине куллен 200 процент тултараççĕ.

Г. Михайлов.

Тимĕр-тăмăр пухаççĕ

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Сталин юлташăн приказне сӳтсе-явнă хыççăн Буденный ячĕпе тăракан колхозри комсомолецсемпе пионерсем çак кунсенче 354 килограмм тимĕр-тăмăр пухса леçсе пачĕç.

Н. Виноградов.

Фронтовиксен çемьисене пулăшмалли вунăкунлăх

„Фронтри юлташсем çак пулăшăва нихăçан та манмĕç“

КӲКЕÇ. Шуркари «Победа» колхоз фронтовиксен çемьисемшĕн тăванла тăрăшать. Çарти çынсен çемьисене кĕске вăхăт хушшинчех 3.000 тенкĕ укçа, тырпул парса тата вутă хатĕрлесе турттарса пулăшнă. Отечественнăй аслă вăрçăран аманса таврăннă юлташсен çемьисене колхоз 25 сысна çури валеçсе пачĕ.

Фронтран пирĕн земляк Иван Изотов службăра тăракан чаçăн командирĕ колхозниксем патне çыру ячĕ. Унта вăл Изотов юлташ геройла çапăçни çинчен çырса пĕлтерчĕ. Ку çырăва колхозниксем пухура сӳтсе-яврĕç. Изотов юлташăн çемьине колхозри пулăшу кассиччен тырă, укçа-тенкĕ парса пулăшрĕ, колхозниксем вутă турттарса пачĕç.

— Çарти çынсен çемьисене вăрçă инваличĕсене тата эвакуаци йĕркипе килнĕ çынсен çемьисене тăванла пулăшнине фронтовиксем нихăçан та манмĕç, — теççĕ колхозниксемпе колхозницăсем.

Г. Миронов,
П. Иванов.

Çар çыннисен çемьисемшĕн тимлĕн тăрăшар

Пирĕн халăх хăйĕн тăван çарне яланах пĕтĕм чун-чĕререн юратнă. Халĕ, отечественнăй аслă вăрçă кунĕсенче, Хĕрлĕ Çарăн паттăр воинĕсем хамăрăн тăван çĕршыва нимĕç захватчикĕсенчен хӳтĕленĕ чухне, çав юрату татах та ытларах ӳсрĕ. Пирĕн çар хăйĕн пĕтĕм чунĕпе — халăх çарĕ, вăл халăхпа таччăн çыхăнса тăрать, тăшмана хирĕç кĕрешме халăхран куллен вăй-хăват илсе тăрать. Амăшĕ хăйĕн юратнă ачишĕн тăрăшнă пекех, пирĕн халăх та Хĕрлĕ Çара тĕреклетессишĕн вăрçăччен мĕн кирлине пурне те тунă, халĕ вара, нимĕçсен ирсĕр йыткĕтĕвĕсене хирĕç пыракан аслă çапăçу кунĕсенче, совет халăхĕ пĕтĕмĕшпех хăйĕн çарĕпе пĕтĕçсе тăчĕ. Хĕрлĕ Çар хамăрăн тăван çĕршывăн чыслĕхĕпе никама пăханманлăхне хӳтĕлет. Çавăнпа та ĕнтĕ тăшмана хирĕç кĕрешнĕ çĕрте совет халăхĕ хăйĕн çарне мĕн кирлине пурне те парса тăрать. Вырăс çĕрĕн нумай ĕмĕрсем хушшинчи историйĕнче ютçĕршывсенчен тăшмансем килсе тапăннă чухне халăх хăйĕн çарне патриотла юратнине кăтартса паракан тĕслĕхсем сахал мар. Анчах Русь çĕрĕ пуçланса кайнăранпа çĕршыв хăйĕн воинĕсемшĕн нихăçан та хальхи пек пĕтĕм чун-чĕререн тăрăшман.

Халăх фронтшăн тăрăшасси нумай енлĕ пулса пырать. Халăх Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă япаласем пухать, танксен колоннисемпе авиаэскадрильйăсем тума укçа-тенкĕ пухать. Фронтри боецсем патне парнесем ярса тăрать, уйрăм çар чаçĕсене шефа илет, фронта патриотла çырусем ярса тăнипе паттăр воинсене хавхалантарать тата ытти те.

Фронта вăйлă пулăшса пынипе пĕрлех, пирĕн çар çыннисен çемьисемшĕн, мăшăрĕсем, пиччĕшĕсемпе шăллĕсем тата ашшĕсем Хĕрлĕ Çарта тăракан çемьесемшĕн тимлĕн тăрăшмалла. Çакă вăл питех те пысăк задача. Ăна пурнăçа кĕртес ĕç çине мĕнпур общественноçăн тата, чи малтан, партипе совет органĕсен тимлĕн çаврăнса пăхмалла. Çар çыннисен çемьисемшĕн тăрăшасси тăшмана хирĕç пыракан кĕрешӳре Хĕрлĕ Çарăн вăй-хăватне ӳстерессипе таччăн çыхăнса тăрать. Пирĕн çакна лайăх ăнланса илмелле: çар çыннисен кил-йышĕн шухăш-кăмăлĕ çирĕп пулнинчен кашни боец çапăçу хирĕнче хастар пуласси килет. Çавăнпа та ĕнтĕ эпир çар çыннисен çемьисемшĕн мĕн чухлĕ ытларах тăрăшатпăр, Хĕрлĕ Çар воинĕсен тăшмана хирĕç пыракан кĕрешӳри хастарлăхĕ çавăн чухлĕ пысăкрах пулать.

Совет государстви çар çыннисен çемьисемшĕн питех те тимлĕн тăрăшать. Пирĕн правительство çар çыннисен çемьисене пособисемпе пенсисем пама нумай укçа-тенкĕ уйăрса хурать, льготăсемпе нумай тĕрлĕ пулăшусем парать, вĕсен пурнăçпа йăла нушисене тивĕçтерессишĕн ывăнма пĕлмесĕр тăрăшать. Чăваш республикинче кăна 1942 çулта, туллимар даннăйсем тăрăх, çар çыннисен çемьисене 65,5 миллион тенкĕ ытла пособи тӳленĕ; укçа-тенкĕ налогĕсем енĕпе 86 миллион тенкĕлĕх ытла льготăсем панă; çара кайнă колхозниксен хуçалăхĕсене государствăна аш-какай, сĕтçу парас енĕпе тата ытти тĕрлĕ обязательствăсем тĕлĕшпе те пысăк льготăсем панă.

Çар çыннисен çемьисемшĕн колхозсемпе ялсоветсен председателĕсем тата районсенчи партипе совет органĕсен руководителĕсем тимлĕн тăрăшнине кăтартса паракан тĕслĕхсем пирĕн сахал мар. Çапла, сăмахран, Шупашкар районĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхозра, колхоз председателĕ Гаврилов юлташ пуçарнипе, çара кайнă колхозниксен çемьисем валли 15 сысна çури, 60 пăт тырă, çĕрулмипе ытти çимĕçсем нумай панă. Çар çыннисен çемьисене вутă çителĕклĕн турттарса панă, вĕсен ачисене те куллен пулăшса тăраççĕ. Çав районри «Красный Дол» колхозра та çар çыннисен çемьисене пулăшма колхозниксем 160 пăт тырă, 846 пăт çĕрулми, пахча-çимĕçсем тата ытти нумай тĕрлĕ япаласем пухнă. Шупашкар районĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем çар çыннисен çемьисене пулăшмалли вунăкунлăхăн малтанхи кунĕсенчех 10 пин пăт ытла тырă, 1.200 пăт ытла çĕрулми пухнă, 2.500 кубометр ытла вутă турттарнă.

Анчах çар çыннисен çемьисемшĕн пур çĕрте те мар-ха партипе правительство ыйтнă пек тăрăшаççĕ. Çар çыннисен çемьисене пособисемпе пенсисем тата льготăсем памалли законсене пăснисем те сахал мар тĕл пулаççĕ. Хăшпĕр чухне тата çар çыннисен çемьисен пысăк мар ыйтăвĕсене те, вĕсене вырăнта çăмăллах тивĕçтерме май пур пулин те, вăхăтра татса памаççĕ. Çар çыннисен çемьисем çине бюрократла чунсăррăн пăхнин тĕслĕхĕсене чылай илсе кăтартма пулать. Анчах вĕсем пурте çакăн çинчен калаççĕ: уйрăм колхозсемпе ялсовечĕсен, райсоветсемпе горсовет исполкомĕсен тата парти органĕсен руководителĕсем партипе правительствăн кăтартăвĕсем çинчен манаççĕ. Çар çыннисен çемьисемшĕн тăрăшни вăл — пĕтĕм халăх пирĕн Хĕрлĕ Çаршăн тăрăшниех пулать. Халăхăн çав пулăшăвне организацилекенсем, пуринчен малтан, колхозсемпе ялсовет председателĕсем тата райсоветсемпе хула совет исполкомĕсен председателĕсем пулма тивĕçлĕ, çак ĕçе парти органĕсем ертсе пыма тивĕçлĕ.

Хальхи вăхăтра пур районсенче те, райсовет исполкомĕсем çумĕнче, çар çыннисен çемьисене пурнăçпа йăла тĕлĕшĕнчен пулăшса пырас енĕпе ĕçлекен государственнăй отделсем тунă. Çав отделсен работникĕсем хăйсен ĕçне хăвăртрах тытăнма тата çар çыннисен çемьисене пулăшас ĕçри çитменлĕхсене çийĕнчех пĕтерме тивĕçлĕ. Ку енĕпе Шупашкар хула совечĕ çумĕнчи отдел (отдел заведующийĕ Кузнецова юлташ) питех те тĕрĕс турĕ. Вăл хăйĕн ĕçне кашни çар çыннин çемьи мĕнле пурăннине тĕрĕслесе тухнинчен тытăнчĕ. Отдел работникĕсем хăйсен умне çакăн пек задача лартнă: кашни çар çыннин çемьи мĕнле пурăннине пĕлмелле, çав çемье закон тăрăх илме тивĕçлĕ пособие е пенсие вăхăтра илнипе илменнине, унăн пурнăçпа йăла условийĕсем мĕнлине, вăл мĕн енĕпе хăйне йывăр туйнине пĕлсе тăмалла. Шупашкар хула совечĕн çав отделĕ çар çыннисен çемьисене вутă парас, хваттер укçи енĕпе льготăсем парас, çар çыннисен ачисене тумтирсемпе кĕпе-йĕмсем тата атă-пушмаксем тупса парас енĕпе сахал мар пулăшнă. Çав отдела çар çыннисен çемьисен членĕсем тĕрлĕ ыйтусемпе куллен пырса тăраççĕ, вĕсен ыйтăвĕсене кунта тĕрĕс тата вăхăтра татса параççĕ.

Шупашкар хула совечĕн çав отделĕ çар çыннисен çемьисене пулăшас тĕлĕшпе ĕçлеме общественноçран хăй тавра йышлă актив явăçтарчĕ. Шупашкар хулинчи мĕнпур предприятисемпе учрежденисенче, суйлав округĕсем пулнă вырăнсенче актива организациленĕ те ĕнтĕ. Çав актив, отдел работникĕсем пуçарса пынипе, çар çыннисен çемьисене пулăшас тĕлĕшпе хăйĕн ĕçне анлăн сарма тытăнчĕ. Предприятисемпе учрежденисен руководителĕсем, пуçламĕш парторганизацисен секретарĕсем хăйсен организацийĕсенчи активистсен ĕçне ертсе тата пулăшса пыма тивĕçлĕ. Активистсем вара государствăн çак пысăк ĕçне вăйлăн малалла яма пултараççĕ.

Райсоветсемпе хула совет исполкомĕсем çумĕнчи çав çĕнĕ отделсен малтанхи утăмĕсем çакна кăтартса параççĕ: çĕнĕ отделсенче ĕçлекен работниксем хăйсен задачине тĕрĕс ăнланса илнĕ, ĕçе активлăн тытăннă. Çакна ăна Шупашкар, Вăрнар, Пăрачкав, Шăмăршă, Етĕрне, Вăрмар тата ытти районсенчен килнĕ хыпарсем çирĕплетсе параççĕ.

Çĕнĕрен тунă отделсене общественность тата, чи малтан, райсоветсемпе хула совет исполкомĕсен председателĕсем, ВКП(б) райкомĕсен секретарĕсем ĕçре пысăк пулăшу парса тăраççĕ. Çакă вăл çав çыннисен çемьисене пулăшмалли вунăкунлăх иртсе пынă çĕрте уйрăмах уççăн палăрать.

Партипе совет органĕсен ку енĕпе татах та ытларах вăя хурса ĕçлемелле. Çар çыннисен çемьисене пулăшас тĕлĕшпе ĕçлекен отделсене активлăн, куллен ертсе пымалла. Çар çыннисен çемьисене пулăшас ĕçе пирĕн мĕнпур общественноçа явăçтармалла, çар çынни çемьисен пурнăçпа йăла условийĕсене лайăхлатас тĕлĕшпе хамăр алăра пур пек майсемпе пуринпе те туллин усă курмалла. Вăхăтра вутă парса тăмалла, çурт-йĕрсене юсаса памалла, атă-пушмаксемпе тумтирсене юсас ĕçре пулăшмалла, çар çынни çемьисен членĕсене ĕçе вырнаçма, вĕсен ачисене вĕренме пулăшмалла тата ытти те.

Колхоз правленийĕсемпе ялсовечĕсен çара кайнă колхозниксен çемьисемшĕн тимлĕн тăрăшмалла: ялхуçалăх артелĕн уставĕ тăрăх тунă фондсенчен, колхозри пулăшу кассисенчен материальнăй пулăшу парса тăмалла, кирлĕ чухне лашасем парса пулăшмалла тата ытти те. ВКП(б) райкомĕсемпе хула комитечĕсен секретарĕсен çакна пурнăçа кĕртессишĕн çине тăмалла: предприятисемпе учрежденисен руководителĕсем, пуçламĕш парторганизацисемпе профсоюз организацийĕсем хăйсен çара кайнă работникĕсен çемьисене куллен тата пур енĕпе те пулăшса тăччăр, вĕсемшĕн куллен тата çине тăрса тăрăшчăр.

Боецсемпе командирсен çемьисемшĕн тăрăшса, эпир совет тылне çирĕплететпĕр, хамăрăн Хĕрлĕ Çарăн вăй-хăватне ӳстеретпĕр, хамăрăн таса çĕр çинчен нимĕç захватчикĕсене хăваласа кăларассишĕн пыракан кĕрешӳре кашни боецăн хастарлăхне татах та ытларах çĕклетпĕр.

А. МАТВЕЕВ,
Чăваш АССР Совнаркомĕн председателĕ.

КОМСОМОЛ ПУРНĂÇĔ

Комсомол организацисен ĕçне лайăхлатассишĕн

ÇĔМĔРЛЕ. («Чăваш Коммуни» корр.). ВКП(б) Çĕмĕрле райкомĕн виççĕмĕш пленумĕ комсомолăн районри организацийĕсен ĕçĕсем çинчен сӳтсе-яврĕ. Ку ыйту тăрăх ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ О. Кощеева юлташ доклад туса пачĕ.

Докладчик уйрăмах çакна палăртрĕ: районри комсомолецсем отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче хăйсен мĕнпур вăйне тăван çĕршывпа Хĕрлĕ Çара пулăшнă çĕре пама тăрăшаççĕ. Комсомолецсен политикăллă тата производствăллă активлĕхĕ ӳссех пырать. Районри чи пысăк предприятире — комбинатра — комсомолецсем пур çĕрте те пример кăтартаççĕ. Кунта нормăна тултарса пырайман комсомолецсем çук, чылайĕшĕсем 2—3-шер норма туса ĕçлеççĕ. Юлашки вăхăтра çеç кунта темиçе фронтовой бригада организациленĕ. Пурте вĕсем заданисене 120—200 процент таран тултарса ĕçлеççĕ. Малта пыракан Краснощеков, Вашуркина, Серебрякова, Иванова, Губанихина тата ытти вуншар комсомолецсем куллен 2—4 норма туса пыраççĕ. Çав вăхăтрах вĕсем обществăллă ĕçе те активлăн хутшăнаççĕ.

Комсомолец-трактористсем Михайлов, Кирюшин, Столбов иртнĕ çул хăйсен ĕç нормисене 150—180 процент тултарса ĕçленĕ. Вĕсем хăйсен тракторĕсене лайăх тытаççĕ, горючипе перекетлĕн усă кураççĕ. Иртнĕ çулта Михайлов юлташ пĕччен 352 килограмм горючи перекетленĕ.

Анчах комсомолăн районри организацийĕн ĕçĕнче ситменлĕхсем те сахал мар. Хăшпĕр пуçламĕш организацисенче воспитани ĕçĕ япăх пулса пырать, çамрăксем хушшинче кирлĕ пек ĕçлемеççĕ, комсомолецсем производствăран аякра тăраççĕ. Сăмахран, Пояндайкинăри, Вăрман Тăванри пуçламĕш организацисенче пухусем 5—6 уйăх иртсен çеç пулса иртеççĕ. Кунти комсомолецсем производствăра та, обществăллă ĕçре те хăйсен пултарулăхне кăтартни куранмасть-ха.

1942 çулта тата кăçалхи икĕ уйăх хушшинче районĕпе 413 çамрăка комсомол ретне илнĕ. Анчах уйрăм организацисем ку тĕлĕшпе япăх ĕçлеççĕ. «Труженик» заводра çамрăксем чылай, çапах вĕсене комсомол ретне явăçтарас тĕлĕшпе заводри пуçламĕш организаци ĕçлемест, çулталăк хушшинче те кунта çамрăксемпе пĕр хут çеç пуху ирттернĕ.

Паянхи куна 8 колхозра комсомолăн пуçламĕш организацийĕсем çук тата пĕлтĕр 15 организаци саланса кайнă.

Кунпа пĕрлех ВКП(б) райкомĕн III-мĕш пленумĕ комсомолăн шкулсенчи организацийĕсем вĕренӳ пахалăхне тата дисциплинăна лайăхлатас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлесе пынине палăртрĕ. Уйрăм шкулсенче вĕренӳре ĕлкĕрсе пырайманнисем нумайăн шутланаççĕ. Çакă вăл чăн малтанах пионер организацийĕсем тивĕçлипе ĕçлесе пыман çĕрте хыттăн палăрать.

ВКП(б) райкомĕн пленумĕ комсомол организацин çитменлĕхĕсене тĕплĕн палăртрĕ. Вăл çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе конкретлă ĕçсем тума йышăнчĕ.

Х. ЛИСИН.

Ют çĕршывсенче

Принципсем çинчен панă ыйтусене хирĕç общинăсен палатинче Черчилль ответлени

ЛОНДОН, мартăн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, общинăсен палатинче Черчилле çапла ыйту панă: хăйĕн колонийĕсене тытса тăрас тĕлĕшпе Великобритания малашне те ответлă пулмалла, тесе колонисен министрĕ Стэнли тунă заявленипе правительство килĕшет-и? (Мартăн 6-мĕшĕнче Оксфордри консервативнăй ассоциацин ларăвĕнче каланă сăмахĕнче Стэнли колонисене пĕтĕм тĕнчери организаци тытса тăмалла текен теорие йышăнманнине палăртнă. Вăл çапла каланă: колонисене тытса тăрас тĕлĕшпе пĕтĕм ответлăха Великобритания хăй çине илет, тенĕ).

Ку ыйту çине Черчилль çапла ответ панă: Англи колонийĕсене тытса тăрас тĕлĕшпе ответлăх Великобритани çинче анчах выртать. Правительство ку тĕлĕшпе çапла политика тытать: кӳршĕри тата туслă çĕршывсемпе таччăн çыхăнса ĕçлесе, Британи империйĕн ăшĕнче колонисене политика, экономика тата социальнăй пурнăç тĕлĕшпе мĕн май килнĕ таран ытларах аталантармалла тенĕ.

Атлантика хартинче палăртнă принципсене ĕлĕкхи пекех йышăнни çинчен премьер-министр калама пултарать-и? тесе ыйтнине хирĕç Черчилль «паллах, йышăнатăп», тенĕ.

Лейборист Шинуэлл çапла ыйту панă: премьер-министр тунă заявлени правительство ӳлĕмрен пĕтĕм тĕнчери мандатсем çинчен сӳтсе явасшăн мар пулнине пĕлтермест-и? тенĕ. Черчилль çапла ответленĕ: «Кондоминиум системине (пĕр-пĕр территорие пĕрлешсе тытса тăрас системăна) эпир яланах хирĕç пулнă, мĕншĕн тесен вăл системăн результачĕсем яланах япăх пулнă. Паллах, хамăрăн аслă союзниксен интересĕсем, тĕнчен хăшпĕр пайĕсенче пирĕннипе çыхăнса тăнă пирки, эпир вĕсемпе тачă çыхăнса тăма шутлатпăр», тенĕ.

Англи колонийĕсен малашлăхне татса парас ыйтура доминионсен тата Британири нацисен сассине шута илессине пĕлтереççĕ-и сирĕн сăмахăрсем? тенине хирĕç Черчилль çапла ответленĕ: Хăйсен районĕнчи хăшпĕр колонисен пуласлăхне татса парас тĕлĕшпе вĕсен сассине халех те итлеççĕ ĕнтĕ, тенĕ.

ФРАНЦИН НАЦИ КОМИТЕЧĔПЕ ГЕНЕРАЛ ЖИРО СĂМАХĔ ТАВРА

Алжирти радио çапла пĕлтерет: генерал Жиро Францин наци комитечĕн представительне Катра генерала «Французсен пĕрлешӳне татăклă йĕркелес шутпа» Жиро де Голль генералпа тĕлпулма хатĕрри çинчен пĕлтерме ыйтнă. «Килĕшӳ тума кирли çинчен, — тесе çырать генерал Жиро, — де Голль генерала эпĕ Касабланкăрах каларăм».

ЛОНДОН, мартăн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, де Голль генерал ăна Жиро çывăхри вăхăтрах Çурçĕр Африкăра тĕл пулса калаçма чĕннине йышăннă. Анчах де Голль çапла условилартнă: Çурçĕр Африкăри лару-тăру хальхи пекех ăнăçлăн аталанса пымалла, тенĕ.

ЧЕРЧИЛЛЬ ЗАЯВЛЕНИЙĔ ÇИНЧЕН ХЭЛЛ МĔН КАЛАНĂ

ВАШИНГТОН, мартăн 18-мĕшĕ. (ТАСС). США государственнăй секретарĕ Хэлл официально йĕркепе çапла каланă: «Мартăн 14-мĕшĕнче тухса каланă генерал Жиро сăмахне общинăсен палатинче Черчилль хĕрӳллĕн саламласа, вăл питĕ паллă заявлени тунă. США правительстви Англи премьер-министрĕ тунă çав пит паха заявление пĕтĕмпех йышăнать, французсене пĕрлештерес çул çинчи çав çĕнĕ утăма тулли кăмăлпа ырлать».

КАЛЛАИ ИРĔКСĔРЕХ ЙЫШĂННИ

ЛОНДОН, мартăн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Венгрин премьер-министрĕ йышăнура сăмах тухса калани çинчен Венгрири радио пĕлтернине пичетлет. Вăл каланă тăрăх, Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтра Венгрия пысăк çухатусем тунă. Венгри армине, тенĕ Каллаи, вăйлăн пыра-пыра çапнă, госпитальсенче аманнисем туллиех, тенĕ

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔПЕ ФЛОЧĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, мартăн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, мартăн 15-мĕшĕнче каçхине Англи бомбардировщикĕсем тăшманăн Бретанири Сен-Бриек аэродромне атакăланă. Çавăн пекех тата Голланди çыранĕ патĕнчи карапсене атакăланă.

Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: мартăн 14-мĕшĕнче Англи авиацийĕ Сицили утравĕнчи объектсене тапăннă. Кунсăр пуçне Кăнтăр Италири чугунçул объекчĕсене атакăланă.

ЛОНДОН, мартăн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, Англи бомбардировщикĕсем ĕнер Падерборнри (Ганновертан 60 миля кăнтăр-хĕвеланăçнерехре) чугунçул мастерскойĕсем çине вĕçсе пырса тапăннă. Çав кунах ирхине Англин çыран çывăхĕнче çӳрекен çăмăл карапĕсем Çурçĕрти тинĕсре тăшманăн грузсем тиенĕ икĕ пысăк карапне путарнă.

АНГЛИ АВИАЦИЙĔ ЭССЕНА АРКАТНИ

ЛОНДОН, мартăн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, мартăн 13-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Эссен çине бомбăсем пăрахнипе хулан нумай районĕсене пĕтĕмпех аркатса тăкнă.

Англин авиаци министрĕ Синклер Англин бомбардировочнăй авиацийĕн командующийĕ патне — авиаци маршалĕ Гаррис патне ăна тав туса телеграмма янă. Телеграммăра çапла каланă: Крупп завочĕсене хирĕç тунă операци ăнăçлăн вĕçленнипе Германири çав чи пысăк çар предприятин чылай пысăк пайне аркатса тăкнă, тенĕ.

ЛОНДОН, мартăн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Эссен çине вĕçсе пырса тапăннă чухне кашни хутрах 400 самолет ытла пулни халĕ палăрнă.

Англи информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, мартăн 13-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Эссен çине бомбăсем пăрахнипе Крупп заводĕнчи 34 цеха сиенленĕ.

ТУРИ САВОЙĂРИ ЛАРУ-ТĂРУ

ЛОНДОН, мартăн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Англири «Дейли телеграф энд морнинг пост» хаçат çапла çырать: Тури Савойăри сăртсенчи партизансен тĕп ушкăнĕнче демобилизациленĕ 2.000 француз салтакĕпе офицерне яхăн шутланать. Вĕсен çумне Германие ĕçе хăваласа каясран тарса пĕрмаях сăртсем хушшине пыракан çамрăксене хушас пулать. Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Мароккори радио çапла хыпар сарнă: Тури Савойăри Франци партизанĕсем вăйлăрах та вăйлăрах хирĕç тăрса кĕрешеççĕ, анчах вĕсен лару-тăрăвĕ питĕ йывăр-ха. Партизансем хирĕç тăнине пусарма янă моторизованнăй полици вырăнне унта халĕ нимĕçсемпе итальянецсен отрячĕсене янă.

Англи информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, Франци чиккинчен çапла пĕлтернĕ: Тури Савойăри Франци патриочĕсем нимĕç войскисен командованийĕ тата Виши полицийĕ панă ультиматума сирсе пăрахнă. Вăл ультиматума тусене тарнă çынсене пурне те хирĕçме пăрахма тата влаçсен аллине парăнма хушнă пулнă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

АРКАДИЙ ЭСХЕЛЬ

ĂМĂРТКАЙĂК

ПОЭМА

2. Кĕтӳçĕ

Хăлат та ăмăрткайăк
Вĕçеççĕ тӳпере.
Анчах та ĕмĕт кайĕ
Татах та çӳлерех.

Ĕмĕрхи евĕр йăлтăр-ялтăр,
Шевле сапса аялалла,
Хĕррипе тулнă алтăр çăлтăр
Хуллен ял урлă тайăлать.

Вăрман чӳхенчĕ. Ял çӳçенчĕ.
Çакна ак шăпчăк сиссенех
Сывлăшпала çума пикенчĕ
Янравлă кĕмĕл сассине.

Çурхи васкавлă çăмăл шуçăм
Тĕтрелле йăлăм тăррине
Кал-каллăн карчĕ хăйĕн пурçăн,
Сенкер те çутă каррине.

Анчах ял лăпкă ыйхăра-ха.
Хуралтă урлă, тĕлĕк пек,
Каç тĕксĕмĕ шăвать вăрахăн
Темле тăрлавсăр кĕрĕкпе.

Çав тĕксĕме сирсе ярасшăн,
Çунат çапса та хĕртĕнсе,

Ир хыпарне кӳрсе чăвашшăн
Авăтса ячĕç автансем.

Автан юрри ял тăрăх карĕ
Çĕр тĕрлĕ сас тăка-тăка.
Вара хуллен килсе шаккарĕ
Якур мучи те алăка.

Пĕчĕк тусне ĕçе чĕнмешкĕн
Мучи килет кашни ирех.
Кăçалтанпа вĕсем пĕрлешнĕ, —
Хветут çӳрет халь кĕтӳçре.

Хветутăн амăшĕ ал-хапăл
Уçса кĕртет те мучине,
Леш çенĕкре вара: —Ăçта вăл,
Ман паттăрăм?—тесе чĕнет.

Унтан пырать те хăйĕн хытă
Аллисемпе çемçен-çемçен
Шăлать вара пĕчĕк Хветутăн
Кăтра, тăваткăл пуçĕнчен.

—Ачам, ачам,—тет вăл ачашшăн,—
Ыйхи те пĕчĕк чух анчах. —
Çак çеç вĕт кирлĕ-çке ачашăн,
Савать лăпканине ача.

Хветут çакна туйса вăр-вăр çеç
Сирет çири шăналăка:
—Якур мучи, пит лăпкас марччĕ,
Вĕрентес мар ачашлăха.

Унтан пĕр алтăр шыв ăсать те
Тухать васкавлăн çавăнма.
Ак вăл ĕçе кайма та хатĕр —
Кĕтӳ кĕтме те ывăнма.

Хăйне, паллах, тӳсме çук йывăр,—
Анчах вăл систермест вуçах.
Кулса калать:—Ӳссен те çыврăп,
Ун чух хам пысăк—хам хуçа.

Сак самантра вара—тăнла-ха! —
Йĕри-тавра пур кӳршĕсен
Янраççĕ тутлăн та пылакăн
Ытарайми сĕт витрисем.

Анчах мучипеле Хветутăн
Кĕтӳç черечĕн апатнех
Çисе пулас пулать-çке тутă, —
Куллен сĕнккетĕн çын патне.

Ун пек чухне чи ырă пыл та
Темле вырăнмасть чĕре çумне.
Çак пурнăç витнĕ питĕ хытă
Хветутăн сисĕмлĕ чунне.

...Часах хĕвел те тухрĕ чаплăн;
Мĕнпур пуянлăх хуçи пек,
Тĕнче çине çут ылттăн сапрĕ
Вăл хăйĕн улăп ывçипе.

Вара шултра та чĕрĕ сывлăм
Пуçларĕ вут пек ялкăшма.
Епле илемлĕ эс, çĕршывăм,
Анчах та сан вăл шухăш мар.

Вăрăм пушша çакан та эсĕ,
Хăв нушуна ху çакнă пек,
Тухса каятăн пĕр чĕнмесĕр
Микитасен пралукĕпе.

Ик сăрт хушши çăй-çайпа тулнă,
Сăйлаççĕ выльăх-чĕрлĕхсем.
Якур мучи те кăшт салхуллăн
Пырать хăй тĕллĕн ĕрлешсе.

Ак анлă улăх. Эс ун тăрăх
Утатăн çӳçенсе çарран.
Çапла сан пурнăç. Эсĕ тăлăх.
Асап куратăн ачаран.

Илемлĕ сывлăм—çутă ылттăн
Сан чĕпĕленнĕ уруна
Касать-çке çĕçĕ евĕр хыттăн,
Пăчăртатса юн сăрхăнать.

Çапах та ир çинче, тăванăм,
Нумай-нумай пурнас килет.
Хаваслăн янăрать вăрманĕ
Пин кайăкăн сассипеле.

Куккукĕ авăтать вăрахăн,
Ача шутлать те хĕпĕртет.
Хăй ăшĕнче ыйтать:—Кала-ха,
Мĕнле кунçул мана кĕтет?

Сенкер тӳпе кĕмĕл шăнкравăн
Тăрри юррипе янăрать.
Итле, Хветут, итле те савăн,
Тĕнче илемлĕ сан умра.

Анчах сана çапах та тунсăх,
Çапах та тем ыйтать чĕре.
Сана çак улăхри чĕр-чунсăр
Пĕлмест никам та тĕнчере.

Вĕсем сан хуйăхна ăнланнăн,
Чечен те çамрăк ухльăме
Мăшăлтатса çнеççĕ канлĕн,
Чĕлхи çеç çуккă пуплеме.

Çӳреççĕ лăпкă. Нӳрĕ курăк
Çине выртан эс месерле.
Санра темле илемлĕ юрă
Темле хумханнăн чĕрĕлет.

Инçе, инçе эс тинкеретĕн
Хура та тарăн куçупа.
Сан шухăш лăпланмасть пĕрре те.
Тĕнче талккишĕпе чупать.

Сӳлте-çӳлте—мĕнле вăл ирĕк! —
Хăюллăн ярăнать хăлат.
Ача шутлать: мĕскершĕн пирĕн
Вăл çук-ши çавăн пек хăват?

— Мĕскершĕн çуккă-ши çунатăм?
Мĕншĕн çунатлă мар чĕре?
Эп те вара хăлат пулаттăм
Çӳреттĕм ирĕк тĕнчере.

Çак вăхăтра пĕр систермесĕр
Мучи пырать, кăшт ӳсĕрет:
—Мĕн шухăшлан, ачамçăм, эсĕ?
Мĕскер куратăн тӳпере?

Хветут тăрать. Вăл кăшт именнĕн:
—Хăлат çине пăхатăп,—тет.—
Мĕскерле вăй ăна çĕкленĕ?
Мĕнле вăл пит çӳлте вĕçет?

Якур мучи вара ларать те,
Хăй чĕлĕмне кăшт тӳрлетсе:
—Хăлатсенчен те вăйлăрах,—тет,
Вĕçеççĕ ăмăрткайăксем.

— Мучи, эс курни ăмăрткайăк?
—Таçта, тен, курнă пуль ара...
Унтан вăл Хветута пĕр лайăх,
Манми юмах ярса парать.

(Малалли пулать).

Малалли. Пуçламĕшĕ 61-мĕш номĕрте.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редакци секретарĕн—4—26, промышленность пайĕн—3—99, ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23.

НТ 313 Типография № 1, Управления полиграф промышленности при СНК ЧА ССР. Заказ № 2 Ф. б. 58. 42 п.